28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 ИЮЛЬ 29 ВЫРСАРНИКУН 145(6896) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Тырпула хăвăрт тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртер, государствăна тырпул тата ытти ялхуçалăх продукчĕсем памалли хамăрăн обязательствăсене вăхăтра тултарар!

Воронеж облаçĕнчи Добринка районĕнчи Ильич ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ ялхуçалăх артелĕн колхозникĕсемпе колхозницисем Совет Союзĕнчи мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене

ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Хаклă юлташсем!

Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи фашистла Германие тĕппипех аркатнипе тата нимĕçсем пĕр сăмахсăр парăннипе вĕçленчĕ. Çакăн пек аслă çĕнтерÿ тунăшăн совет халăхĕ хамăрăн мухтавлă Хĕрлĕ Çара, ăслă çулпуçне тата полководеца Совет Союзĕн Генералиссимусне Иосиф Виссарионович Сталина тав тума тивĕç.

Отечественнăй аслă вăрçăн хаяр кунĕсенче тылри колхозниксем — арçынсемпе хĕрарăмсем, старниксемпе ача-пăчасем, пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле ырмиканми ĕçлесе Хĕрлĕ Çарпа çĕршыври халăха апат-çимĕç, промышленноçа—чĕртавар çителĕклĕ таранах парса тăчĕç. Вăрçăн хаяр тĕрĕслевĕнче колхоз стройĕн вăйĕпе пултарулăхĕ туллин палăрчĕ. Партипе правительство колхоз стройĕ çинчен сталинла тăрăшни, Сталин юлташ совет хресченĕсем Отечественнăй вăрçă çулĕсенче пĕтĕм вăйпа ĕçленине тата вĕсен патриотизмне пысăка хурса хаклани ĕмĕр-ĕмĕр пирĕн ачасемпе ачасен ачисен асĕнче пулĕ.

Вăрçăччен эпир коллективлă ĕçпе хамăр обществăллă хуçалăха пур енчен те аталантартăмăр, кашни колхозника культурăллă та пуян пурнăç туса патăмăр. Лайăх ĕçленĕшĕн пирĕн колхоза Ленин орденĕ парса наградăланă. Виçĕ çул хушши пирĕн артель Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкине хутшăнчĕ.

Вăрçă кунĕсенче пирĕн ялхуçалăх артелĕн колхозникĕсем хамăрăн Тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçсене тĕрĕс ăнланса илсе ĕçлерĕç. Вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене пăхмасăрах пирĕн колхоз артель хуçалăхне ăнăçлă аталантарса пычĕ, государствăна çулран çул ытларах та ытларах тырпул тата ытти ялхуçалăх продукчĕсем парса тăчĕ.

Иртнĕ çул государствăна тырпул тата ялхуçалăх продукчĕсем памалли плана эпир срокчен тултартăмăр. МТС-а натуроплата пĕтĕмпех тÿлесе татрăмăр тата кăçалхи ĕçсемшĕн аванс шучĕпе 250 центнер тĕштырă хыврăмăр. Эпир государствăна аш-какай, сĕт-çу, çăм, çăмарта памалли плансене ытлашшипех тултартăмăр. Хĕрлĕ Çарăн Главнокомандованин фондне 454 центнер тĕштырă патăмăр. Иртнĕ çул колхоз 1.880.000 тенкĕ тупăш илчĕ.

Халĕ, Совет çĕршывĕ мирлĕ аталану тапхăрне куçнă вăхăтра, пирĕн колхозниксем чи малтанах çĕршыва вăрçă кÿрсе хăварнă сурансене хăвăртрах тÿрлетесси çинчен, хамăрăн юратакан Тăван çĕршывăн вăй-хăватне тата çÿлерех çĕклесси çинчен шухăшлаççĕ. Нимĕç захватчикĕсем аркатса хăварнă промышленноçа, транспорта, хуласемпе ялсене хăвăртрах юсаса ура çине тăратма, халăхăн пурнăç условийĕсене пур майсемпе те лайăхлатса пыма çĕршыва апат-çимĕç, чĕртавар, чи малтанах тырпул ытларах памалла. Çакă пулать ĕнтĕ пирĕн тивĕç, пирĕн обязанность.

Кăçал эпир çураки планне ытлашшипех тултартăмăр, вăйлă тырпул пăхса çитĕнтертĕмĕр. Пирĕн задача — çав тырпула хăвăрт тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртесси, государствăна тырпул тата ытти ялхуçалăх продукчĕсем памалли обязательствăсене вăхăтра пурнăçласси пулса тăрать.

Юлташсем—колхозниксемпе колхозницăсем! Эпир Сире çапла чĕнсе калатпăр: заводсемпе фабрикăсенчи рабочисенчен пример илсе, тырпула ăнăçлă пухса кĕртессишĕн тата государствăна тырпул тата ытти ялхуçалăх продукчĕсем памалли обязательствăсене вăхăтра пурнăçлассишĕн, Çĕнтерÿ ячĕпе Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту организацилеме чĕнетпĕр.

Ку ăмăртура эпир хамăр çине çакăн пек обязательствăсем илетпĕр:

1. Хамăр колхозри 786 гектар çинчи пĕрчĕллĕ пур тырăсене те 14 ĕç кунĕ хушшинче пухса кĕртме.

2. Тырпула тăккаламасăр пухса кĕме. Лашасемпе ĕçлекен машинăпа тата алăпа вырса-çулса пăрахнă пĕтĕм тырра çийĕнчех кĕлтесене çыхса, купаласа хума тата малтанхи кунсенчех çапма ĕлкĕреймен тырра капана хывма. Уя тăкăнса юлнă пур пучахсене те тĕплĕн пухса кĕртме.

3. Пире Добринка МТС-ĕ уйăрса панă «Сталинец» комбайна лайăх ĕçлеттерме: комбайнпа вырса пухмалли участоксене вăхăтра уйăрса пама тата комбайн патĕнче комбайн ĕçленĕ вăхăтрах тырпула пушатса илме, шывпа горючи кÿрсе пама, кĕтессене çулса илме опытлă колхозниксене уйăрса çирĕплетме. Комбайна чарăнса тăмасăр ĕçлеттерме пур условисене те туса пама. Комбайн хыççăн çийĕнчех арпа-улăма пухса илме.

4. Тырă вырма пуçласан тепĕр 5 кунран авăн çапма тытăнса пĕтĕм тырпула 25 ĕç кунĕ хушшинче çапса пĕтерме. Пирĕн колхоза çирĕплетсе панă МК-1100 молотилкăпа ĕçлеме яланлăх бригада уйăрма. Итемсене вăхăтра хатĕрлеме. Йĕпе-сапа вăхăтĕнче ĕçлемешкĕн витнĕ итем туса хатĕрлеме. Тырпула тасатма тата типĕтме ятарласа звеносем уйăрма.

5. Вăрлăх участокĕсем çинчи тырпула кашни культурăшăн чи лайăх вăхăтра пухса кĕртме.

6. Сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне государствăна 2.650 центнер тырă парса тата МТС-а ĕçлепĕшĕн 1.600 центнер натуроплата тÿлесе хамăрăн памалли плана пĕтĕмпех тултарма.

7. Сахăр завочĕсене ытларах чĕртавар туса пама. 30 гектар çинчен сахалтан та 6.000 центнер сахăр кăшманĕ пухса кĕрсе ăна пĕтĕмпех государствăна пама.

8. Колхоз выльăх-чĕрлĕхĕ валли çителĕклĕ таранах выльăх апачĕ хатĕрлеме. Хĕллеччен 400 тонна силос хывма. Нумай çул хушши ÿсекен курăксен вăрлăххăн хăварнă 24 гектар çинчи тырпула кăтартуллăн пухса кĕртме.

9. 348 гектар кĕрхи тырра вăхăтра акса хăварма. Таса çĕртмене тепĕр хут культиваци туса тухма, кĕрхи тырра чи лайăх вăхăтсенче сортласа тасатнă вăрлăхпа акса хăварма.

10. Октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 600 гектар кĕрхи çĕртме тума. Пусуçаврăнăшĕ тăрăх хĕвелçаврăнăш, сахăр кăшманĕ тата çĕрулми лартма палăртнă пур участоксене те 200 гектар çинчи тырпула пухса кĕнĕ хыççăнах хăмăл сухаласа хăварма.

11. Ĕç дисциплинине çирĕп пăхăнма. Ĕçе юрăхлă пур колхозниксене те тырпул пухма илсе тухса кашни кунах иртен пуçласа каçчен ĕçлеме. Пур ĕçсене те уйрăм сдельщинăпа тата пĕчĕк ушкăнлă (звеносем тăрăх) сдельщинăпа тутарма. 80 ача валли ача ясли уçма тата хирти стансем тума.

12. Хĕрлĕ Çартан таврăнакан пирĕн хаклă воин-çĕнтерÿçĕсене тивĕçлипе кĕтсе илме, вĕсене кирлĕ пек пулăшусем пама.

Юлташсем — колхозниксемпе колхозницăсем!

Çĕршыва ытларах апат-çимĕç, промышленноçа—чĕртавар туса парар, хамăрăн юратакан Тăван çĕршыв хăватне малалла çирĕплетме пĕтĕм вăя хурса ĕçлер.

Хĕрлĕ Çарăн аслă çĕнтерĕвĕсене социализм строительствин мирлĕ вăхăтри фронтĕнче ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе çирĕплетсе хăварар.

Сывă пултăр Ленинпа Сталинăн аслă партийĕ—пире çĕнтерÿсем тума хавхалантаракан тата организацилекенĕ!

Сывă пултăр пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр халăхсен юратакан аслă çулпуçĕ, пирĕн аттемĕр тата тусăмăр Совет Союзĕн Генералиссимусĕ Сталин юлташ!

Ильич ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕнчи колхозниксен пухăвĕнче сÿтсе-явса йышăннă.

Колхозниксен пĕрлехи пухăвĕ хушнипе чĕнсе калани çине çаксем алă пуснă:

Колхоз председателĕ Ф. И. ДОРОФЕЕВ;
Парти организацийĕн секретарĕ С. П. ЕВСТАФЬЕВ;
Комсомол организацин секретарĕ Н. Г. ШАЛЬНЕВА;
Бригадирсем П. Н. КОВАЛЕНКО, И. И. ГАЛАКТИОНОВ;
Звеньевойсем С. М. КРУТСКИХ, А. А. ДОРОФЕЕВА;
Колхозниксем П. К. МАВЛИН А. В. Г. ЛОПАТИНА;
Конюхсем И. А. ВОРОБЬЕВ, М. Т. ТЕЛЕГИН.

ЧĂВАШ АССР-чи КОЛХОЗСЕНЧЕ 1945 ÇУЛХИ ИЮЛĔН 25-МĔШĔ ТĔЛНЕ ЯЛХУÇАЛĂХ ĔÇĔСЕМ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

Районсем	Курăк вăрлăх участокĕсем уйăрнă	Çаран ути çулнă	Акнă курăксем çулнă	Силос хывнă
Улатăр	100,0	65,9	—	68,0
Элĕк	82,2	75,8	30,8	34,1
Вăрнар	100,0	108,1	68,1	71,2
Йĕпреç	72,0	214,6	19,4	12,9
Ишлей	91,2	87,0	6,8	—
Калинино	87,4	79,2	30,3	—
Канаш	100,0	104,4	18,4	—
Куславкка	100,0	85,4	—	33,7
Комсомольски	93,5	82,7	47,2	88,9
Красноармейски	103,8	98,0	25,0	23,8
Хĕрлĕ Чутай	84,3	100,0	21,8	48,0
Кувакино	52,5	79,4	—	—
Сĕнтĕрвăрри	77,9	100,0	16,8	121,0
Муркаш	48,4	104,1	17,2	28,6
Октябрьски	100,0	99,2	18,9	35,9
Первомайски	50,0	88,5	16,2	37,5
Пăрачкав	74,0	68,9	4,1	33,2
Советски	78,9	100,8	38,7	24,9
Сĕнтĕр	55,0	116,2	27,3	59,9
Вăрмар	100,0	100,0	36,9	57,6
Çĕрпÿ	72,5	100,0	19,6	—
Шупашкар	70,4	100,5	19,6	33,7
Чкаловски	100,0	90,0	45,3	—
Чурачăк	73,6	100,0	38,5	73,5
Шăмăршă	18,0	79,0	—	9,6
Шăхасан	96,5	100,0	41,1	—
Çĕмĕрле	57,1	83,4	22,4	—
Етĕрне	87,6	107,4	60,5	60,9
Елчĕк	60,3	82,8	25,0	54,7
Тăвай	100,0	87,1	18,4	27,6

ВĂРНАРСЕН ПРИМЕРĔПЕ

МУРКАШ. Районри колхозсем Вăрнар районĕнчи ялхуçалăх работникĕсем республикăри мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, МТС-семпе хатĕрлев организацийĕсен работникĕсене чĕнсе каланине сÿтсе-явса, тырпула кĕске срокра пĕр тăккаламасăр пухса кĕртме пулса, хăйсем çине конкретнăй обязательствăсем илеççĕ.

Кашмаш ял Советĕнчи «Свобода» колхоз тырпул пухса кĕртме пур енчен те хатĕрленсе çитнĕ. 4 жнейкăпа 4 молотилка, авăн çапмалли двигатель юсаса пĕтернĕ. Авăн çапма 1,5 тонна ытла горючи хатĕрленĕ. Тырпул хумалли 8 склада дезинфекци тунă, кăçал 100 çĕнĕ михĕ çĕлесе хатĕрленĕ, колхозăн 4 витнĕ итем, 1 авăн пур.

Тырпул пухса кĕртмелли плана колхоз членĕсен пухăвĕнче çирĕплетнĕ. Государство комиссийĕ «Свобода» колхоз тырпул пухса кĕртме хатĕрленсе çитнĕ тесе йышăнчĕ.

Государствăна тырă парас тĕлĕшпе транспорт бригади организациленĕ. Вăл бригадăна тырă турттарма 12 лаша уйăрнă. Сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне колхоз государствăна тырă парса татма пулать.

Ф. МАЛЫШКИН.

Социализмлă ăмăрту вăйланса пырать

Вăрмар районĕнчи колхозсенче СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн «1945 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленине тата Вăрнар районĕнчи колхоз председателĕсемпе, МТС работникĕсем, ялхуçалăх специалисчĕсемпе хатĕрлев органĕсенче ĕçлекенсем Çĕнтерÿ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнма чĕнсе каланине сÿтсе-яваççĕ.

«Свобода» колхозра та çак ыйтупа пĕрлехи пуху пулса иртрĕ. Колхоз председателĕ орденоносец Иванов юлташ хăйĕн сăмахĕнче çапла каларĕ:

— Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем пĕтĕм вăя хурса ĕçленĕшĕн правительство мана «Знак почета» орден парса наградăларĕ. Çак награда татах та лайăхрах ĕçлеме хушать. Кăçал пирĕн уйхирте вăйлă тырпул çитĕнет. Ăна пирĕн пĕр тăкаксăр тата вăхăтра пухса кĕртмелле. Пирĕн пĕтĕм çĕршывра Çĕнтерÿ ячĕпе анлă ăмăрту сарăлса пырать. Пирĕн республикăри колхозсем хушшинче çак паха пуçарăва Вăрнар районĕнчи колхозниксем хускатса ячĕç. Пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем те, çав ăмăртăва хутшăнса, тырпула вăхăтра пухса кĕртессишĕн тата государствăна тырă срокра парса татассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле.

Государство комиссийĕ тĕрĕсленĕ хыççăн «Свобода» колхоз тырпул пухса кĕртме тата государствăна тырă пама пур енчен те хатĕрленсе çитни палăрчĕ. Шнейкăсемпе молотилкăсене юсанă, транспорт инвентарĕ çителĕклĕ. Тырă хумалли складсене пĕтĕмпех юсанă, тасатнă тата дезинфекциленĕ. Тырпул пухса кĕртмелли ĕç планне туса, колхозниксен пухăвĕнче сÿтсе-явса çирĕплетнĕ. Колхозниксем кĕрхи тырăсене 5 ĕç кунĕнче, çуртыррисене 8 ĕç кунĕнче пухса кĕртме, сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне государствăна тĕштырă парса татма йышăнчĕç. Колхоз 40 гектар çĕрулми лартнă, ăна сентябрĕн 10-мĕшĕччен кăларса пĕтерме, сентябрĕн 25-мĕшĕччен государствăна парса татма пăхнă. Августăн 20-мĕшĕ тĕлне ыраш акса пĕтермелле. Тырпул пухса кĕртес ĕçре, лашасемсĕр пуçне, кÿлсе ĕçлеме вĕрентнĕ 35 ĕнепе усă курма пăхнă. Колхозра ĕнесемпе лайăх ĕçлеççĕ. Çураки вăхăтĕнче фронтовик арăмĕ Х. Давыдова хăйĕн ĕнипе ĕçлесе 60 ĕçкунĕ тунă. Вăл тырпул пухса кĕртнĕ çĕрте те хăйĕн ĕнипе ĕçлеме шутлать.

Тырпул пухса кĕртме хатĕрленес енĕпе Петров, Матвеев юлташсен бригадисем тата колхоз тимĕрçи Ларионов юлташ лайăх ĕçленĕ. Вĕсем машинăсемпе транспорт инвентарьне пĕтĕмпех лайăх юсанă.

Колхоз кăçал кок-сагыз акнă. Кок-сагыз плантацинче Матросова юлташăн бригади ĕçлет. Кок-сагыз лайăх ÿсет. Кăçал кунта кок-сагыз тымарне чылай пухса илме шутлаççĕ.

Анчах Вăрмар районĕнче тырпул пухса кĕртме начар хатĕрленекен колхозсем те пур-ха. Калинин ячĕпе тăракан колхозра (председателĕ Николаев юлташ) тырпул пухса кĕртме план туман. Вăрнарсем чĕнсе каланине те сÿтсе-явман. Çурласемпе çавасем хатĕр мар. Силос хывмаççĕ. Тырă калчисене çумкурăкĕнчен тасатман. Витнĕ итемсемпе авăнсене хатĕрлемен. Амбарсене тасатса юсаман.

Кутемерти, Çĕнĕ Мăнтăрти колхозсем те тырă вырма начар хатĕрленеççĕ. Кунта çум çумласа пĕтермен, ĕç планĕсем туман. Мăйракаллă шултăра выльăхсене кÿлсе ĕçлеме вĕрентмен. Çак ялсенчи колхозсенче выльăх апачĕ хатĕрлес ĕç те начар пырать, силос хывас тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ.

ВЛКСМ Вăрмар райкомĕ выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçе организацилеме колхозсене 30 çын янă, анчах çав комсомолецсем колхозсенче мĕн туни çинчен райкомолра пачах та пĕлмеççĕ.

Халĕ районри колхозсем тырпул пухса кĕртес ĕçе мĕнле хатĕрленнине ятарласа тунă комиссисем тĕрĕслеççĕ. Çав комиссисем тупнă кăлтăксене çийĕнчех пĕтерес тĕлĕшпе кашни колхоз пикенсех ĕçлемелле, пĕтĕм ĕçе райисполкомпа ВКП(б) райкомĕн контроллесе тăмалла.

М. ПРОХОРОВ.

Ялхуçалăх ĕçĕсенчен аякра тăракан ял Совечĕ

СОВЕТСКОЕ. Çухра ял Советне пĕтĕмпе виçĕ колхоз кĕрет. Анчах вĕсем ялхуçалăх ĕçĕсене çителĕксĕр пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Çĕртме сухине виçĕ колхозран пĕри те туса пĕтермен, уйри тырпула çумкурăкĕнчен тасатас тĕлĕшпе те япăх ĕçлеççĕ.

Ял Совет исполкомĕ çаксене лайăх пĕлсе тăрать. Анчах ялхуçалăх ĕçĕсене колхозсем мĕнле пурнăçа кĕртсе пынипе питĕ сахал интересленет, вĕсене ку тĕлĕшпе кирлĕ пек пулăшса пымасть. 1945 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен ял Совет исполкомĕн ларăвĕнче те, колхоз активĕн канашлăвĕнче те сÿтсе-явман. Ку тарана çитсе тырпул пухса кĕртмелли плана туса хатĕрлемен, кадрсене те ĕçе вырнаçтарса тухман.

Колхозсем уйри тырпула пухса кĕртме çителĕксĕр хатĕрленеççĕ. «Клевер» колхоз 2 жнейкăран пĕрне çеç юсанă, молотилкăсем те юсавлă мар. «Коминтерн», «Машина» колхозсем ялхуçалăх машинисемпе инвентарĕсене юсама пачах та тытăнман. Ку колхозсенче пĕринче те çурласене шăллаттармаççĕ.

«Машина» тата «Коминтерн» колхозсем тырă йышăнмалли складсене çуса тасатма тата вĕсене дезинфекцилеме тытăнман. Итемсене тасатма шутламаççĕ. Транспорт инвентарĕсене бригадăсем тăрăх çирĕплетсе тухман, михĕ-шăналăксене хатĕрлемеççĕ.

Ĕç вăхăтĕнче колхозра пĕрлешÿллĕ столовăйсем уçни пысăк вырăн йышăнса тăрать. «Машина» колхозра столовăй утă çулма тухнă кунсенчех ĕçлеме тытăннă. Анчах «Коминтерн», «Клевер» колхозсенче пĕрлешÿллĕ столовăйпа ача яслисене уçасси пирки аса та илмеççĕ. Ку тĕлĕшпе çимĕçсем те хатĕрлемеççĕ.

Уйри тырпула пухса кĕртесси ответлă ĕçсенчен пĕри пулса тăнине Çухра ял Совет исполком председателĕн О. Семенова юлташăн ăнланса илмелле ĕнтĕ, хатĕрленÿ ĕçне ял Совечĕн куллен ертсе пымалла.

Я. СИГАЙ.

Тырпул пухса кĕртнĕ тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрленĕ вăхăтра массăллă-политикăллă ĕçе туса пырас ыйту пирки пулса иртнĕ канашлу

Июлĕн 27-мĕшĕнче Шупашкарта ВКП(б) райкомĕсен агитаципе пропаганда пайĕсен заведующийĕсен, районри хаçат редакторĕсен тата радиокомитет уполномоченнăйĕсен канашлăвĕ пулса иртнĕ.

Канашлура 1945 çулта тырпул пухса кĕртнĕ тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрленĕ вăхăтра туса пымалли массăллă-политикăллă ĕçĕн задачисем çинчен ВКП(б) Чăваш Обкомĕн агитаципе пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарĕ А. Вишняков юлташ доклад туса пачĕ.

Вишняков юлташăн доклачĕ тăрăх пренире çаксем тухса каларĕç: парти райкомĕсен агитаципе пропаганда пайĕсен заведующийĕсем—Фомин (Чкаловски), Мухин (Кувакино), Кузнецов (Улатăр), Алексеев (Вăрнар), Ортиков (Йĕпреç), Майоркин (Октябрьски), Игнатьев (Çĕрпÿ); радиокомитетăн Хĕрлĕ Чутай районĕнчи уполномоченнăйĕ Тихонов, Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Кинофикаци управленийĕн начальникĕ Зюзин; районри хаçат редакторĕсем—Сигаев (Советски), Бубукин (Пăрачкав) Князев (Кувакино); Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Культпросвет учрежденийĕсен управленийĕн начальникĕ Медведев тата «Союзпечать» кантурĕн начальникĕ Салтыков.

Канашлу хупăнас умĕн ВКП(б) Чăваш Обкомĕн пĕрремĕш секретарĕ И. Чарыков юлташ сăмах тухса каларĕ. Вăл çакна палăртрĕ: мирлĕ строительство тапхăрне куçни массăллă-политикăллă ĕçе пур енчен те вăйлатса пыма хушать. Отечественнăй аслă вăрçăра эпир тунă историлĕ çĕнтерÿсен пур пĕлтерĕшне те ĕççыннисене ăнлантарса памалла, çакăнпа усă курса вара социализмлă ăмăрту сарса ямалла, хамăрăн аслă Тăван çĕршывăн вăрçăри тата экономикăри хăватне малалла çирĕплетес тесе ĕççыннисене хавхалантарса пымалла.

Чарыков юлташ пирĕн республика кăçал çуракине лайăхрах иртернине палăртрĕ. Кăçал вăйлă тырпул пуласса кĕтме пулать. Анчах та ăна пĕр тăккаламасăр пухса кĕртмелле. Çавăнпа та тырпула вăхăтра тата пысăк пахалăхпа пухса кĕртме, ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлеме колхозлă ялăн мĕнпур вăйне мобилизацилемелле, çак ĕçе тунă çĕрте массăллă-политикăллă ĕçĕн пур формисемпе те усă курмалла. Халĕ МТС-сенче политикăллă ĕçе вăйлатмалла, çак ĕçе ĕнтĕ комбайнсемпе тырпул пухмалли ытти машинăсене юсассине хăвăртлатас тесе, çапла вара тырпула пур енчен те хатĕрленсе çитсе пухса кĕртес тесе туса пымалла.

Уйрăмах агитаципе пропаганда ĕçĕн пахалăхĕ çине тимлĕн çаврăнса пăхмалла. Çак ĕçе хуçалăхпа политикăллă паха кампанийĕсемпе—тырпул пухса кĕртме хатĕрленессипе, ăна пухса кĕртессипе тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлессипе çыхăнтарса пымалла. Массăллă-политикăллă ĕçе тĕрлĕрен формăсемпе туса пырас пулать.

Агитаторсем пулма примерлă, авторитетлă, ĕçчен çынсене, агитаципе пропаганда ĕçне юратакан çынсене уйăрмалла. Парти райкомĕсен секретарĕсен агитаторсем валли час-часах докладсем туса памалла, вĕсене лайăхрах ертсе пымалла.

Чарыков юлташ çакна палăртрĕ: парти райкомĕсем районри хаçатсене начар ертсе пынă пирки хăшпĕр район хаçачĕсем кичемлĕ, вĕсенче официальнăй материалсем çеç пичетлесе кăлараççĕ, вĕсем вырăнти пурнăçа çутатса памаççĕ. Районти малта пыракан çынсем хаçатсене начар хутшăнаççĕ. Районри хаçатсем хăйсем те пĕр пуçарнă ĕçе вĕçне çитиех туса пĕтермеççĕ, хăйсен материалĕсем пирки мĕнле результатсем пулнине тăтăшах контроль туса пымаççĕ. ВКП(б) райкомĕсен районри хаçатсен пахалăхне тата содержанине лайăхлатас тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнас пулать.

— СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ Чăваш республикĕ 25 çул тултарнă ятпа чăваш ĕççыннийĕсем патне янă хăйсен саламĕнче,—тет Чарыков юлташ,—Чăваш республикинчи ĕççыннисем малашне те пирĕн аслă Тăван çĕршыври патриотсен малти ретĕнче пуласси не шанса каларĕç. Ялти коммунистсемпе комсомолецсен, агитаторсемпе пропагандистсен, хаçат работникĕсен задачи ĕнтĕ çакна массăсене тĕплĕн ăнлантарса парасси, колхозниксен, трактористсен, ялхуçалăхĕнчи мĕнпур работниксен социализмлă ăмăртăвне, тырпул пухассине кăтартуллăн иртерни çинчен тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлемелли плана вăхăтчен тултарни çинчен аслă Сталина памалли рапорт çине чи малтан алă пусмалли право илессишĕн пыракан социализмлă ăмăртăва анлăн организацилесси пулса тăрать.

Петродворец фонтанĕсене юсани

ЛЕНИНГРАД, июлĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Петродворец паркĕсенчи фонтансен системине, нимĕçсем аркатса тăкнăскерсене, юсасси пирки решени йышăннă. Инженерсен тĕпчевĕсен геодези тресчĕ проект ĕçĕсене тума тытăннă та ĕнтĕ. Трест управляющийĕ Булыщкин юлташ ТАСС корреспондентне çапла пĕлтерне:

— Петродворец фонтанĕсене XVIII-мĕш ĕмĕрĕн малтанхи çĕрĕнче тунă пулнă. Вăл системăра шыв упракан 40 пĕве, 60 километра çити тăсăлакан усă каналсем, 35 километр тăршшĕ тăсăлакан хупă трубасемпе пĕвесем. 350 шыв пĕрĕхтермеллисем пулнă. Хальхи вăхăтра итальянецла икĕ фонтана тата Самсон каналĕ патĕнчи акăлчанла фонтансене юсамалли тĕпчев ĕçĕсене туса çитерне. Пысăк Грот, «Самсон» тата ытти фонтансене юсамалли проектсене туса пыраççĕ. «Самсон» ятлă чи паллă фонтана юсама 4 километр тăршшĕ шыв пăркисем хурса тухмалла тата акăлчан пĕвине юсамалла. Халĕ Петродворецра тĕпчевçĕсен икĕ ушкăнĕ ĕçлет.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

ЧĂВАШ АССР-ĕнчи КОЛХОЗНИКСЕМПЕ КОЛХОЗНИЦĂСЕНЕ, ЯЛХУÇАЛĂХ, ПРОМЫШЛЕННОСТЬ, КУЛЬТУРА ТАТА ИСКУССТВО РАБОТНИКĔСЕНЕ ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН ХИСЕПЛĔ ГРАММОТИПЕ НАГРАДĂЛАССИ ÇИНЧЕН

Малалли. Пуçламăшĕ «Чăваш Коммунин» 135, 138, 139, 141 тата 142-мĕш номерĕсенче.

ПĂРАЧКАВ РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

6. Мария Ивановна **Маяясовăна**—МТС-ри трактористкăна.
7. Яков Федорович **Сабанова**—«Красная Горка» колхоз председательне.
8. Александр Николаевич **Сморызанова**—Папанин ячĕпе тăракан артельри тирсăран производствин заведующине.
9. Иван Павлович **Сычева**—Буденный ячĕпе тăракан колхозри колхозника.

СОВЕТСКИ РАЙОН ТĂРĂХ:

1. Николай Владимирович **Владимирова**—Хучашри вăтам шкул директорне.
2. Яков Григорьевич **Григорьева**—«Клевер» колхоз председательне.
3. Вера Васильевна **Крыловăна**—Советскири вăтам шкулти вĕренÿ пайĕн заведующине.
4. Афанасий Михайлович **Михайлсва**—«Красный Октябрь» колхоз председательне.
5. Иван Алексеевич **Сотамсва**—Шĕмшеш ял Совет исполкомĕн председательне.
6. Фадей Семенович **Чаганова**—«Радио» колхоз председательне.
7. Семен Яковлевич **Яковлева**—«Сеятель» колхозри старши конюха.

СĔНТĔР РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

1. Иван Александрович **Астрова**—Госбанкăн районри отделенийĕн управляющине.
2. Матрена Васильевна **Борисовăна**—«Колос» колхозри пăру пăхакана.
3. Порфирий Павлович **Вершева**—райпромкомбинатри рабочие.
4. Григорий Михайлович **Гаврилова**—«Новый путь» колхоз председательне.
5. Нина Васильевна **Даниловăна**—райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономне.
6. Лариса Михайловна **Кузьминана**—Наркомзагăн районри уполномоченнăйĕн агентне.
7. Анна Михайловна **Михайловăна**—«Ядро» колхозри ĕне сăвакана.
8. Иван Егорович **Патеева**—Кăпас ял Совет исполкомĕн председательне.
9. Василий Трофимович **Петухова**—МТС-ри трактор бригадин бригадирне.
10. Александра Никитична **Сандровăна**—«Новый путь» колхозри ферма заведующине.
11. Николай Иванович **Суворова**—Юнкăпуçри çичĕ çул вĕренмелли шкул директорне.

ВĂРМАР РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

1. Александр Иванович **Афанасьева**—Кĕтеснерти типĕтмелли завод директорне.
2. Лидия Владимировна **Владимировăна**—«Спортинвентарь» фабрикинчи станочницăна.
3. Татьяна Ефимовна **Ефимовăна**—«Спортинвентарь» фабрикинчи сборщицăна.
4. Николай Ефремович **Ефремова**—Молотов ячĕпе тăракан колхоз председательне.
5. Перасковья Касьяновна **Касьяновăна**—Энĕшпуçĕнчи вăрман складĕнчи грузчицăна.
6. Григорий Кондратьевич **Кондратьева**—Госсортфонд пункчĕн заведующине.
7. Евгения Васильевна **Кудряшовăна**—районри библиотека заведующине.
8. Григорий Васильевич **Моклакова**—Кавалти вулав çурчĕн заведующине.
9. Василий Никандрович **Никандрова**—МТС-ри трактор бригадин бригадирне.
10. Федор Евдокимович **Сапаркина**—«Красная Кубня» колхоз председательне.
11. Мария Семеновна **Семеновăна**—«Красная Кубня» колхозри ĕне сăвакана.
12. Федор Семенович **Семенова**—ВКП(б) райкомĕн çарĕç пайĕн заведующине.
13. Егор Ефремович **Терентьева**—Тикешкасси ял Совет исполкомĕн председательне.

ÇĔРПӲ РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

1. Игнатий Васильевич **Васильева**—«Балтиец» колхоз председательне.
2. Александра Федоровна **Ведмиде**—Госсортфонд пункчĕн заведующине.
3. Агафия Гордеевна **Гордеевăна**—«Сталинцы» колхозри сурăх пăхакана.
4. Андрей Григорьевич **Григорьева**—«Ĕмĕт» колхозри конюха.
5. Владимир Егорович **Егорова**—Громов ячĕпе тăракан кустарьсен промысла артелĕн председательне.
6. Вера Алексеевна **Клементьевăна**—МТС-ри старши агронома.
7. Ксения Михайловна **Мечнсвăнэ**—Вĕрмер ял Советĕнчи налог агентне.
8. Анна Николаевна **Сафоновăна**—районри сыхăну конторин старши почта агентне.
9. Мария Тимофеевна **Тимофеевăна**—«Пионер» колхоз бригадирне.
10. Александра Федоровна **Федоровăна**—Лĕпсер ял Совет исполкомĕн председательне.

Малалли пулать.

Çĕмĕрле комбинатĕнче ĕçлекенсен обязательствисем

Республикăри предприятисем Çĕнтерӳ ячĕпе пыракан Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнаççĕ. Çак кунсенче Çĕмĕрле комбинатĕнче рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем пухăвĕ пулса иртнĕ. Унта социализмлă ăмăртăва хутшăнса мĕн-мĕн тăвасси çинчен сӳтсе-явнă. Комбинат коллективĕ çакăн пек обязательствăсем илнĕ:

çулталăкри производство программине декабрĕн 15-мĕшĕ тĕлне, иккĕмĕш çур çулта тракторсемпе ялхуçалăх машинисем валли запаслă пайсем туса хатĕрлемелли плана декабрĕн 5-мĕшĕ тĕлне тултармалла;

иккĕмĕш çурçулта продукци хакне плана пăхнинчен 1,5 процент чухлĕ йӳнетмелле, ĕç тухăçлăхне 5 процент чухлĕ ӳстермелле.

Комбинат коллективĕ рабочисен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатас, вĕсем пурăнакан çуртйĕрсене хĕле хатĕрлес тĕлĕшпе тумалли ĕçсене те тĕплĕн палăртнă. Çак çулта комбинатра ĕçлекенсем валли икĕ хутлă ... çурт, икĕ хваттерлĕ виçĕ çурт тумалла. Пурăнмалли çуртйĕрсене Октябрь уявĕччен хĕле хатĕрлесе çитермелле.

Çĕмĕрле комбинатĕнче ĕçлекенсем фронтовиксен çемьисемпе Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене пулăшас ĕçе те манса хăвармаççĕ. Кунта фронтовиксен çемьисемпе вăрçă инвалидĕсем валли 15 пин тенкĕлĕх фонд тăваççĕ.

Рабочисен пурнăçне лайăхлатас тесе, комбинатăн подсобнăй хуçалăхĕнчи тырпулпа пахчаçимĕçе вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртме пулаççĕ.

Лайăх ĕçлекен вулав çурчĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Шуршăлти вулав çурчĕ малтанхи вăхăтсенче ытла та япăх ĕçлесе пыратчĕ. Халĕ вулав çурчĕн заведующийĕ пулса Н. Кузьмина юлташ ĕçлеме тытăннăранпа, вулав çурчĕн ĕçĕсем чылай лайăхланчĕç. Ял Совечĕ вулав çурчĕ валли хăйне уйрăм çурт уйăрса, ăна ĕçлеме кирлĕ условисем туса пачĕ.

Вулав çуртĕнче таса та çутă. Стенасем çинче çулпуççен тата Совет Союзĕн Геройĕсен сăнĕсем. Совет халăхĕ Отечественнăй аслă вăрçăра тунă çĕнтерӳсене кăтартакан уйрăм выставка пур. Вăл выставкăра хаçат çинчи статьясем тата тĕрлĕ ӳкерчĕксем нумай.

Вулав çуртне кашни кунах каçхине пушă вăхăтра колхозниксем пухăнса çĕнĕ хаçат-журналсем вулаççĕ. Ирхине вара Мускавран паракан юлашки хыпарсене телефон провочĕ çине вырнаçтарнă репродуктор тăрăх пĕрлешсе итлеççĕ.

Вулав çурчĕ хăйĕн ĕçне план тăрăх туса пырать. Агротехника тата зоотехника кружокĕсем, драмкружокпа хор кружокĕсем ĕçлеççĕ. Кружок занятийĕсене пурĕ 320 çын ытла çӳрет. Зоотехникăпа агротехника кружокĕсем 20 заняти туса иртнĕ. Вĕсене участокри агрономсемпе учительсем ертсе пыраççĕ.

Вулав çурчĕ çумĕнче кашни уйăхрах пĕрер номĕр стена хаçачĕ туса тăрать, ку тарана çитсе пурĕ 8 номер кăларнă. Кунсăр пуçне çуракн вăхăтĕнче бригадăсенче 13 номер боевой листок тухнă. Вулав çурчĕн заведующийĕ Кузьмина юлташ час-часах колхозниксем ĕçленĕ çĕре тухса çӳрет.

Вулав çурчĕ лайăх ĕçленине кура унта çӳрекенсен йышĕ те кулленех ӳссе пырать.

И. ОСИПОВ.

ЭЛЕКТРИЧЕСТВО ÇУТĂЛЧĔ

Эпир Именкассинчи «Малалла» колхоза çитрĕмĕр. Ял Совет председателĕ Федоров юлташ пире Çавал шывĕн вăйĕпе ĕçлекен электростанцие илсе кайрĕ. Эпир пыракан çулăн икĕ енĕпе те «Малалла» колхозăн ыраш калчисем тинĕс хумĕ пек хумханса лараççĕ. Часах эпир шăнкăртатса юхса выртакан Çавал шывĕн çыранĕ патне çитсе тăтăмăр.

Çавал хĕрринче мотор сасси кĕрлесе тăрать. Майĕпе утса, çырма хĕрринче ларакан пысăк чӳречеллĕ çурт патне çитрĕмĕр. Ял Совет председателĕ Федоров юлташ электростанцинче кашни кунах пулать. Вăл хăй пуçарнипе шăтса ӳснĕ ГЭС-а пырса пăхмасăр, унăн 116 лаша вăйлĕ турбини мĕнле ĕçленине астуса тăмасăр чăтма пултараймасть.

Тăхăр çул каярах Матвей Федоровичăн пуçĕнче паха шухăш çуралнă.

Именкасси, Кĕрентейкасси, Хусаккасси, Вутлан, Малти Карăк, Çĕньял Упи, — пурĕ сакăр ял пĕрлешсе электростанци тума шутланă. Пуху туса ирттернĕ. Колхозра электричество станци лартма йышăннă. Пĕр колхоз çумне ытти çичĕ колхозăн колхозникĕсем хутшăннă. Меллĕ вырăн шыраса тупнă хыççăн, Мăн Çавал хĕрринче ĕç пуçланнă. Ĕçе ертсе пыма юнашар ялта çуралса ӳснĕ инженер К. Федоров килнĕ.

Кунĕн-çĕрĕн ĕç вĕренĕ Çавал шывĕн хĕрринче.

Кашни колхоз ĕçлекенсен бригадисене уйăрса панă. Пĕрисем иртен пуçласа каçчен, теприсем хĕвел аннă хыççăн хĕвел тухиччен пĕр канмасăр ĕçленĕ.

1940 çулта электростанци ĕçе кайнă. Колхозниксен килĕсенче чи малтанхи хут Ильич лампи çутăлнă. Анчах çуркунне чипер çуталса тăракан лампăсем пачах сӳнсе ларнă. ГЭС-ра инкек пулнă. Пăрсем пĕвен юписене хуçса пĕтернĕ.

Вара колхозниксемпе колхозницăсем электростанцин пĕвине тепĕр хут урăхлатса пĕвеленĕ. Каллех пӳртсенче электричество çутăлнă, армансем авăрма пуçланă, колхозсен итемĕсем çинчи молотилкăсем ĕçе кĕнĕ.

Именкассинчи электричество станци 8 колхоза, МТС-а, предприятисемпе учрежденисене çутатать, унăн турбинин 68 киловатлă вăйĕпе 4 арман авăрать, 8 колхозăн итемĕ çинче сакăр молотилка ĕçлет. Электричество станци çулсеренех колхозсене 80 пин тенкĕлĕх тупăш парать.

Çавал шывĕ çине ГЭС лартиччен Çавал тăрăхĕнчи колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене яланах кая юлса вĕçленĕ. Авăн çапасси хĕле кĕнĕ. Халĕ ĕнтĕ кая юлса пынă «Пятилетка», «Комбайн», «Çĕнĕ ял», «Победа», «Малалла», «Красная горка» тата Чапаев, Молотов ячĕпе тăракан колхозсем авăн çапас ĕçе чи малтан вĕçлесе пыраççĕ, вĕсем районра малта пыракан колхозсен ретне тăчĕç.

С. ШАДИН.
(Хамăр корр.).

КРАСНОАРМЕЙСКИ РАЙОН.

Промкоопераци ĕçĕсем

РСФСР Совнаркомĕ çумĕнчи Промкоопераци управленийĕн начальникĕпе П. Ф. Кравчук юлташпа калаçни

Промкоопераци производстви кăçал вăрçăччenхи виçене çитеймен-ха. Вăрçă умĕн РСФСР-ти промысла кооперацийĕн системинче 14 пин çурă артель пулнă. Кăçалхи çулăн пуçламăшĕнче 11 пин артель кăна шутланнă. 1944 çулта ирĕке кăларнă районсенче артельсемпе предприятисене çĕнĕрен хута ярас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттернĕ. Смоленск облаçĕнче 100 артель, Краснодар крайĕнче — 277, Курск облаçĕнче—150 артель ĕçлеме пуçланă.

Вăрçă çулĕсенче промартельсем куллен кирлĕ таварсене чылайĕшне сахалтарах туса кăларнă. Халĕ вĕсен ассортиментне пĕрмаях ӳссе пырать. Ленинградра примуссем, ача-пăча велосипечĕсем, электропатефонсем тума пуçланă. Мускаври артельсем хуçалăхра кирлĕ тĕрлĕрен савăт-сапа тума тытăннă. Тĕрлĕ хуласемпе районсенчи 45 артельте сĕтелсем, пукансем тата ытти те тума тытăннă.

Художествăллă аласти промыслисене аталантарасси паллă вырăнта тăрать. Сăмах кунта Дагестанра тăвакан кавирсене, Вологдăпа Ерецкра тăвакан шăтăклăсене, Холмогорта шăмă касса тăвакан япаласене, Уралта чул касса тăвакан япаласене тата ыттисене те туса кăларасси çинчен пырать. Халăхăн çав промыслисем вăрçă вăхăтĕнче те пĕтмен, вăл ĕçе тепĕр хут чĕртсе яраççĕ. РСФСР Совнаркомĕ çумĕнчи Промкоопераци управленийĕ вĕсене çынсемпе, материалсемпе, укçа-тенкĕпе пулăшса тăрать.

Промкоопераци чĕртавар базин хăйĕн промыслисенчи тата государство промышленноçĕн предприятийĕсенчи каяшсем шучĕпе ӳсет. Кунсăр пуçне, промкоопераци çип авăрлакан фабрикăсем организацилет, унăн хăйĕн прокатнăй стансем пур. 1945 çулта промкоопераци 3.600 тонна çип авăрламалла, 19.000 тонна прокат туса кăлармалла, 170 миллион тăваткăл дециметр сăран таварсем тата 1.300 тонна хытă сăран таварсем туса кăлармалла.

Пирĕн предприятисен техникăллă никĕсне çирĕплетес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнаççĕ, производствăн чи лайăх методĕсене пурнăçлама тăрăшаççĕ. Пысăк хăвăртлăхсемпе çĕнĕ кадрсем хатĕрлеççĕ.

Çак ĕçсем вĕсем РСФСР-ти промысла кооперацине малалла аталантарса çирĕплетме пулăшмалла. Промкоопераци умне пысăк задача лартнă: кăçал унăн 10,8 миллиард тенкĕлĕх продукци туса кăлармалла, вăл шутран 8,7 миллиард тенкĕлĕх куллен кирлĕ таварсем—атă-пушмак, пустав, çĕлĕк-картус, сĕтел-пукан, тимĕртен тунă савăт-сапа тата ытти те туса кăлармалла. (ТАСС).

ЛИТВАРИ ÇĂМĂЛ ПРОМЫШЛЕННОÇА АТАЛАНТАРНИ

ВИЛЬНЮС, июлĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Литвăра çĕнĕрен юсанă хыççăн, тир-сăран, атă-пушмак фабрикисем пурте ĕçлеме тытăннă. Вĕсен производстви сарăлсах пырать. Çĕнĕ оборудование ĕçе янă хыççăн, республикăри атă-пушмак предприятийĕсем 3 миллион мăшăр атă-пушмак туса кăларакан пулаççĕ. Вильнюспа Каунасри тир фабрикисенче çĕнĕ япаласем тума пуçлаççĕ.

Сăран предприятийĕсем нумаях пулмасть чĕр-тавар Совет Союзĕн тĕрлĕ районĕсенчен кӳрсе тăнă пулсан, халĕ ăна пĕтĕмĕшпех республика районĕсем тăраççĕ.

Англин çĕнĕ правительстви

ЛОНДОН, июлĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 27-мĕшĕнче премьер-министр Клемент Эттли министрсем пулма кама уйăрса лартни çинчен пĕлтернĕ. Вĕсем ак çаксем:

Премьер-министр — Клемент Ричард Эттли;

Советăн лорд-председателĕ — Герберт Моррисон;

Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ—Эрнест Бевин;

Пичет лорд-хранителĕ—Артур Гринвуд;

Финанс министрĕ — Хью Дальтон;

Суту-илӳ министрĕ—Стаффорд Криппс;

Лорд-канцлер—Уильям Джоуитт.

Советăн лорд-председателĕ — Герберт Моррисон общинăсен палатин лидерĕ пулать.

Эттли çапла каланă: ытти министрсене уйăрса лартсан ун çинчен хăй вăхăтĕнче пĕлтерсе пырăпăр, тенĕ.

ЭТТЛИ КАЛАНИ

ЛОНДОН, июлĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Англири информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, суйлавсен результачĕсем паларнă хыççăн Эттли çапла каланă:

«Çывăхри темиçе çул хушшинче Англипе пĕтĕм тĕнче умĕнче тăракан йывăр задачăсем пирки эпĕ çăмăллăн шутламастăп. Эпĕ çакна шанса тăратăп: эпир хамăр ĕçе ăнăçлăн вĕçлесси патне илсе пырăпăр, пире вăхăтран вăхăта тухакан тĕнче вăрçисем е вăхăтран вăхăта пулакан пĕтĕм тĕнчери депрессисем хăратса тăмĕç. Çакă ĕнтĕ вăл реконструкци тĕлĕшĕпе ĕçлемеллине çеç мар-ха, ытти халăхсемпе, пуринчен ытла пирĕн аслă союзниксемпе—Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе тата Совет Союзĕпе пĕрлешсе ĕçлемеллине те пĕлтерет».

АНГЛИ ПАРЛАМЕНТНЕ КАМА СУЙЛАНИ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, июлĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Тăтăклă данăйсем тăрăх, Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: 627 суйлав округĕ тăрăх Англи парламентне 390 лейбориста, 195 консерватора, 11 либерала, 14 национал-либерала, 10 независимăя, 2 коммуниста тата ыттисене те суйланă. Университетсенчен суйлакан 12 округ тăрăх кама суйлани çитес эрнере паллă пулать. Пĕр суйлав округĕнче либералсем тăратнă кандидат вилнĕ, çавăнпа вăл округра суйлав çитес кунсенче пулать, унта кама суйлани августăн 9-мĕшĕнче тин паллă пулать.

Пĕтĕмпе çĕнĕ парламентра 640 депутат пулать, 1935 çулта суйланă парламентра 615 депутат пулнă.

АМЕРИКА КАРАПĔСЕНЕ АНГЛИ ШЫВĔСЕНЧЕН ИЛСЕ КАЙНИ

ВАШИНГТОН, июлĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тинĕс министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Пĕрлешӳллĕ Королевство шывĕсенчен американецсен пур карапĕсене те илсе кайса пĕтернĕ.

ИРАН ПОЛЬША ХАЛĂХĔН ПĔРЛĔХ ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ ЙЫШĂННИ

ЛОНДОН, июлĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви панă хыпар тăрăх, Иран ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви çапла пĕлтернĕ: Иран правительстви Польша халăхĕ пĕрлĕхĕн вăхăтлăх правительствине йышăннă, тенĕ.

Петэна суд туни

Судăн тăваттăмĕш кунĕ

ПАРИЖ, июлĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри радио пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 26-мĕшĕнче Петэна суд тăвакан судăн тăваттăмĕш ларăвĕ пулса иртнĕ. Ку ларура суд свидетеле чĕннĕ Жюль Жанненэрен ыйтса пĕлнĕ. Жюль Жанненэ Франци сенатĕн председателĕ пулнă. Вăл çапла каланă: Петэн влаçа илнĕ хыççăн тепĕр кунах Францире абсолютла режим пулса тăни уççăнах палăрчĕ. Палатăсене иккĕшне те салатса ячĕç те текех пухмарĕç.

Петэна хӳтĕлекен адвокат Жюль Жанненэрен Лаваль пирки ыйтнă. Свидетель çапла каланă: Лавалĕн хура ĕçĕсем çинчен эпĕ пĕлнĕ, Лаваль çавăн пек ĕçлесе нимĕçсемпе хăвăртрах килĕшӳ тума тăрăшнă. Лавалĕн те, Петэнăн та,—иккĕшин пĕр тĕллев пулнă. Германипе килĕшӳ туни,—тет Жанненэ,—халăх каçарма пултарайман тивĕçсĕр акт пулчĕ. Чунчĕрери шухăш-кăмăл пире нимĕçсепе хирĕç кĕрешмешкĕн чĕннĕ.

Ун хыççăн суд свидетеле чĕнпĕ Луи Марэнран ыйтнă.

Малалла суд Газель свидетельтен ыйтнă. Вăл 1935 çулта французсен Мадридри посольствинче атташе пулса ĕçленĕ. Газель çапла каланă: Петэн хăй Испанире посол пулса ĕçленĕ чухнех пире министрсен списокне кăтартатчĕ. Çав çынсене вăл влаçа хăй аллине илсен министрсем тума палăртса хунă. Çав списоксенче яланах Лаваль хушамачĕ палăрса тăратчĕ.

Газельтен ыйтса пĕтернĕ хыççăн суд ларăвĕ хупăннă.

Судăн пиллĕкмĕш кунĕ

ПАРИЖ, июлĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Петэна суд тăвакан судăн паянхи ларăвĕнче свидетель Эдуард Эррио каласа памалла пулнă. Анчах ку свидетель сывмар пулнă пирки унтан ыйтассине тепĕр вăхăта хăварнă. Вара суд свидетеле чĕннĕ Леон Блюмран ыйтса пĕлнĕ. Блюм каланă тăрăх, Петэн — республикăна тăшмана сутса янă çын. Блюм шухăшĕпе, Петэн Франције намăса кĕртсе ӳкернĕ пирки айăплă.

Унтан суд Шарль Ру свидетельтен ыйтса пĕлме пуçланă.

США СЕНАЧĔ ПĔРЛЕШНĔ НАЦИСЕН УСТАВНЕ СӲТСЕ-ЯВМА ТЫТĂННĂ

ВАШИНГТОН, июлĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Июлĕн 23-мĕшĕнче США сеначĕ Пĕрлешнĕ нацисен уставне сӳтсе-явма тытăннă. Сенатра пренисем пуçланас умĕн сенатри ют çĕршыв ĕçĕсен комиссийĕн председателĕ Коннели тата сенатри демократсен пуçлăхĕ Бэркли пичет представителĕсемпе калаçнă. Вĕсем çапла каланă: сенатра Пĕрлешнĕ нацисен уставне эрне хушши сӳтсе-явмалла. Çапла сӳтсе-явнă хыççăн сенат çав устава ырласса эпир шанса тăратпăр, тенĕ.

ИРАНРИ РЕАКЦИОНЕРСЕМ СОВЕТ СОЮЗНЕ ХИРĔÇ ĔÇЛЕНИ

ТЕГЕРАН, июлĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). «Меджате Иран» хаçат хăйĕн умстатьинче çапла çырнă: икĕ çул каярах Тегеранра Совет Союзне хирĕç ĕçлекен комитет туса хунă. Комитета Сеид Зия Эд-Дин тата унăн шайки пуç пулса ертсе пыраççĕ. Совет Союзне сăтăр тума çав комитет хулигансене тата бандитсене явăçтарать. Власть Саид аллине куçнăранпа çав комитет хăй членĕсенчен тата комитет майлă ĕçлекен çынсенчен тăракан правительство тума хăтланать. Вара çав правительство комитетăн тĕп тĕллевне—Совет Союзĕпе Иран хушшинчи çыхăнăва пăсса ярасси пурнăçа кĕртме тăрăшмалла.

АНГЛИРИ ПОЛЯК САЛТАКĔСЕМ ТĂВАН ÇĔРШЫВА ТАВРĂНМА ВАСКАÇÇĔ

ЛОНДОН, июлĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Глазго районĕнче тăракан чаçсенчи поляксен офицерĕсемпе унтер-офицерĕсем тата салтакĕсем—пурĕ 150 çын çак кунсенче резолюци йышăннă. Резолюцире çапла каланă:

Эпир никама пăхăнман Польшăн пĕртен-пĕр чăн-чăн правительстви тесе Халăх Пĕрлĕхĕн Правительствине шутлатпăр. Эпир çав правительствăна, çавăн пекех тата тăван çĕршыври поляк çарĕсен верховнăй командованине те пĕр сăмахсăр пăхăнса тăратпăр. Эпир, поляк салтакĕсем, хамăрăн çарпа гражданла власĕсенчен, пуринчен ытла Роля-Жимерский маршалтан пире хăйĕн хӳттине илме, çапла вара тăван çĕршыва хăвăртрах тавăрма ыйтатпăр. Тăван çĕршыва эпир ирĕклĕ те демократиллĕ тата никама пăхăнман Польшăна тĕреклетес ĕçе хутшăнма таврăнасшăн.

США-ра САМОЛЕТСЕМ ТУСА КĂЛАРАС ĔÇ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америка çарĕн сывлăшри вăйĕсен командующийĕн заместителĕ Экер генерал-лейтенант пресс-конференцире çар влаçĕсем 1945 çулта туса кăларма палăртса хунă 44.300 самолета тума чарни çинчен пĕлтернĕ. Çакна пула 7,6 миллиард доллар укçа, 750 пин тонна хурçă тата 900 миллион кĕренке алюмини перекетленет.

Экер каланă тăрăх, «Вĕçекен крепость» йышши хăватлăран та хăватлă бомбардировщиксем тăвасси те ӳсмест, мĕншĕн тесен вĕсенчен 10 процент пĕтме пултарать тени тĕрĕс пулман, вĕсем пĕр процента яхăн кăна пĕтнĕ. «Вĕçекен крепость» йышши самолетсем тума пăрахнă, мĕншĕн тесен вăл йышши самолетсем çителĕклĕ пур. Кунсăр пуçне çав йышши 4.000 самолет Европăран каялла таврăннă.

Экер генерал-лейтенант каланă тăрăх, США кашни уйăхрах Японии çине 270.000 тонна бомба пăрахма палăртнă. Германи çине чи нумай бомба пăрахнă чухне те уйăхне 185.000 тонна кăна пăрахнă пулнă.

ЛĂПКĂ ОКЕАН ÇИНЧИ ВĂРÇĂ

ЛОНДОН, июлĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви панă хыпар тăрăх, союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешӳллĕ командованийĕн штабĕ июлĕн 27-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Америка самолечĕсем Шанхай районĕ çине 400 тонна бомба пăрахнă.

ВАШИНГТОН, июлĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Лăпкă океан çинчи флот командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: июлĕн 26-мĕшĕнче ирхине «Вĕçекен крепость» йышши хăватлăран та хăватлă 350 бомбардировщик ытла японецсен Омута хулинчи (Кюсю утравĕ), Мацуяма хулинчи (Сикоку утравĕ) тата Токуяма хулинчи (Хонсю утравĕ) химипе нефть тасатакан промышленность центрĕсене тапăннă. Çав объектсем çине Америка самолечĕсем 2.200 тонна ытла вут тивертекен бомбăсем пăрахнă.

Вутăпа торфа вăхăтра хатĕрлер

Предприятисемпе учрежденисем валли вутă вăхăтра тата çителĕклĕ хатĕрлесси партипе совет организаци руководителĕсен питех те кирлĕ задачи пулса тăрать. Çак çулхи майпа сентябрь уйăхĕсем хушшинче республикăра пурĕ 308 пин кубометр вăрман, вăл шутран 189 пин кубометр вутă хатĕрлемелле. Районсемпе предприятисен руководителĕсем вутă хатĕрлес ĕçе хакланă çĕрте тата ĕççыннисене çак ĕçе тивĕçлипе организациленĕ çĕрте пысăк ӳсĕмсем тунă. Çĕмĕрле районĕ хĕле валли вутă хатĕрлемелли плана июнĕн 10-мĕшĕ тĕлне касас енĕпе 96 процент, турттарас енĕпе 95 процент тултарнă. Сĕнтĕрвăрри районĕн 15 пин кубометр хатĕрлемелле пулнă пулсан, ку таранччен 10 пин кубометр хатĕрленĕ, 5.500 кубометр турттармалла пулнă пулсан, 3.681 кубометр турттарса кăларнă. Çуллахи вăхăтра вутă хатĕрлес ĕçе Октябрьски, Вăрмар, Елчĕк тата ытти районсенче те начар мар туса пыраççĕ.

Çуллахи вăхăтра вутă хатĕрлемелли плана хăшпĕр наркоматсемпе организацисем те тултарчĕç. Сăмахран, Финанс Халăх Комиссариачĕн коллективĕ хăй валли 450 кубометр, шефа илнĕ шкул валли 100 кубометр вутă хатĕрлерĕ. Хăйсем валли вутă хатĕрлемелли задание Автоуправлени, вендиспансер, малярн станцийĕ, парти курсĕсен коллективĕсем те тултарнă. Çак çулăн малтанхи çуррипче вутă хатĕрлемелли плана вырăнти топливо промышленноçĕн вăрманпромхозĕсем касас енĕпе 167,3 процент, турттарас енĕпе 120,4 процент тултарчĕç. Уйрăмах Сĕнтĕрвăрри, Октябрьски, Çĕрпӳ тата Елчĕк вăрманпромхозĕсем лайăх ĕçлерĕç. Вĕсем вутта плапа пăхнинчен нумайрах хатĕрленĕ тата турттарса тухнă.

Хальхи вăхăтра шкулсемпе сывлăх учрежденийĕсем валли вутă хатĕрлесси уйрăмах ответлă задача пулса тăрать. Çавăнпа та ВКП(б) Обкомĕ июнĕн 20-мĕшĕпе июлĕн 20-мĕшĕ хушшинче шкулсемпе больницăсене хĕле хатĕрлес тата вĕсем валли вутă хатĕрлесе парас тĕлĕшпе уйăхлăх туса ирттерчĕ. Çав уйăхлăхра шкулсемпе больницăсем валли кирлĕ вутта пĕтĕмпех хатĕрлесе, çуррине турттарса тухмалла пулнă. Уйăхлăхра Вăрнар, Канаш тата Хĕрлĕ Чутай районĕсем лайăх ĕçлерĕç. Вĕсем шкулсемпе сывлăх учрежденийĕсем валли хĕл каçма кирлĕ чухлех вутă хатĕрлесе хăварчĕç. Вăрнар районĕнче 3.116 кубометр, Канаш районĕнче 3.258 кубометр, Хĕрлĕ Чутай районĕнче 3.162 кубометр хатĕрленĕ. Шкулсемпе больницăсем валли вутă хатĕрлес ĕç Комсомольски, Октябрьски т. ыт. районсенче те начар мар пырать.

Шкулсемпе сывлăх учрежденийĕсем тата ача сачĕсемпе яслисем валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе нумаях та пулмасть Улатăр хулинчи ĕççыннисен воскресникĕ пулса иртрĕ. Воскреснике 400 çынна яхăн хутшăннă. Вĕсем пĕр кун хушшинче 95 кубометр вутă хатĕрленĕ, вăл шутран 60 кубометрне чугун çул патне турттарса тухнă, вагонсем çине 400 кубометр вутă тиенĕ.

Анчах та хĕле валли топливо хатĕрлес тĕлĕшпе пур çĕрте те кирлĕ пек ĕçлемеççĕ-ха. Хăшпĕр предприятисемпе учрежденисен руководителĕсем çак ĕç хăй тĕлĕнех пулса пырасса шанса лараççĕ, ĕçе хăвăртлатас тесе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ. Вутă хатĕрлес ĕçе хакламанни Йĕпреç, Ишлей, Кувакино, Советски, Сĕнтĕр тата Шупашкар районĕсенче палăрать. Çав районсенче вутта кирлĕ шутран 10—15 процент çеç хатĕрленĕ, турттарасса вара унтан та сахалтарах турттарнă.

Вутă хатĕрлес ĕç Шупашкар хулинче те çителĕксĕр пырать. Июлĕн 20-мĕшĕ тĕлне кунта плапа пăхнин 28 процентне кăна хатĕрленĕ, 22,4 процент чухлĕ турттарса тухнă. Хулари чылай предприятисемпе организацисем вутă хатĕрлес ĕçе тытăнман. Наркомюстăн, Мелькомбинатăн, Спецторгăн, Стройтрестăн, Водосветăн, табак фабрикин тата столовăйсен тресчĕн коллективĕсем пĕр кубометр та вутă хатĕрлемен.

Вутă хатĕрлес тĕлĕшпе Шупашкар вăрманпромхозĕ те (директорĕ Кобяков юлташ) начар ĕçлет. Ку вăрманпромхоз плана хатĕрлес енĕпе 18 процент, турттарас енĕпе 6 процент кăна тултарнă. Кунта вутă хатĕрлес ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур. Вăрман каснă çĕрте пăчкăсем çитмеççĕ, пуртăсем тухăçлă ĕçлеме юрăхлă мар, ĕçмелли шыв çук. Рабочисем шыв илме 3 километра çӳреççĕ. Вĕсем валли çывăрмалли вырăнсем хатĕрлемен, вĕсене начар тăрантараççĕ. Нормăна ирттерсе тултаракан рабочисене çăкăр хушса памаççĕ. Рабочисем хушшинче культурăллă-массăллă ĕçе йĕркелемен. Кунти культработник нимĕн те тумасть.

Хатĕрленĕ вутта Атăл урлă каçарасси питех те пысăк ĕç. Анчах çак ĕçе начар организациленĕ. Чăлха фабрикин Атăл урлă 8.000 кубометр вутă каçармалла. Çавăн чухлĕ вутта каçарас тесе, фабрика руководителĕсем нимĕн те тумаççĕ-ха. Хула Совет исполком председателĕн Аникин юлташăн тата вăрманпромхоз директорĕн Кобяков юлташăн вутă хатĕрлемелли плана тултарас тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнмалла.

II-мĕш кварталта вутă турттарас тĕлĕшпе Кувакино, Чурачăк вăрманпромхозĕсем пачах та ĕçлемен. Çавăн пекех Кӳкеç, Калинино, Комсомольски, Элĕк, Тăвай тата Ишлей районĕсенчи вăрманпромхозсем те вутă турттарас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Вĕсем çак ĕçĕн планне 10—30 процент кăна тултарнă. Апла пулин те çав вăрманпромхозсен директорĕсем вутă турттармалли плана тултарас тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ, район руководителĕсем те вĕсене васкатмаççĕ.

Хатĕрленĕ вутта выртарма кирлĕ мар, вăй пур таран çийĕнчех турттарса тухас пулать. Анчах Шупашкар хула Совет исполкомĕн председателĕн заместителĕ Киселев юлташ организацисене вутă турттарма темшĕн ирĕк памасть. Ку ĕнтĕ пачах та тĕрĕс мар.

Топливо хатĕрлес ĕçре торф пысăк вырăн йышăнса тăрать. Пирĕн республикăра торфа 9 районра хатĕрлеççĕ. Кăçалхи сезонра республикипе пурĕ 91.000 тонна торф хатĕрлемелле. Етĕрне тата Ишлей районĕсенчи торф предприятийĕсем ку тĕлĕшпе начар мар ĕçлеççĕ. Анчах та республикăри чи пысăк предприятисем—Çĕмĕрлери тата Атăл леш енчи предприятисем—торф хатĕрлес тĕлĕшпе ытла та япăх ĕçлеççĕ. Июлĕн 20-мĕшĕ тĕлне Атăл леш енчи предприяти планпа пăхнă 60 пин тоннăран 27.500 тонна кăна, Çĕмĕрлери предприяти 16 пин тонна вырăнне 8.000 тонна çеç хатĕрленĕ. Атăл леш енчи предприяти директорĕ Розов юлташ торф кăларас ĕç япăх пынине рабочисем çитменнипе ăнлантарса парасшăн. Çав вăхăтрах хăйсем районсенчен пыракан ĕç вăйне çирĕплетсе хăварас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ.

Торф кăларма кирлĕ ĕç вăйне районсен çителĕклĕ парса тăмалла. Кун пирки ВКП(б) Обком бюровĕн çак кунсенче пулса иртнĕ ларăвĕ районсене çирĕп кăтарту парса хăварчĕ. Анчах Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпӳ, Ишлей, Шупашкар, Октябрьски тата Калинино районĕсен руководителĕсем парти Обкомĕн кăтартăвне пурнăçламаççĕ, торф кăларнă çĕртен пăрахса килекенсемпе кĕрешмеççĕ.

Торф хатĕрлесси — сезонри ĕç. Çак ĕçе кая хăварма юрамасть. Торф кăларас ĕçĕн хăвăртлăхне ӳстерес пулать. Ĕçĕн ăнăçлăхĕ рабочисем мĕнле ĕçленинчен килет. Рабочисен ĕç тухăçлăхне ӳстерессишĕн тăрăшас пулать. Рабочисене тухăçлă ĕçлеме майсем туса памалла, вĕсен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатмалла, лайăх ĕçлекенсен опытне сармалла. Торф кăларнă çĕрте тухăçлă ĕçлекенсем çук мар. Çĕмĕрлери предприятире Ортикова юлташăн смени кунсерен 2.750 кирпĕч вырăнне 13.600 кирпĕч торф касса кăларать. Правительство Ортикова юлташăн ĕçне пысăка хурса хакларĕ, ăна Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăларĕ. Гаврилова юлташăн звени те кунсерен 10.800 кирпĕч, Мумикова звени—10.200 кирпĕч, Корнилова звени—9.800 кирпĕч кăларать. Атăл леш енчи Мария Иванова бригади те тухăçлă ĕçлет. Бригадăна иртнĕ уйăхри ĕççемшĕн ВКП(б) Шупашкар горкомĕпе хула Совет исполкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне панă. Унсăр пуçне Иванова бригадирпа Ермаков техника РСФСР Топливо промышленность Наркомачĕн Мухтав листипе наградăланă. Куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялав илсе, Иванова бригади çак сезона торф кăлармалли задание августăн 1-мĕшĕ тĕлне тултарма пулчĕ.

Торф кăларас ĕçре лайăх ĕçленĕшĕн Атăл леш енчи предприятин чугун çулĕ çинче ĕçлекен старши мастера Киселев юлташа «За трудовую доблесть» медальпе, торф кăларакана Дружинина юлташа «За трудовое отличие» медальпе наградăланă.

Пирĕн фабрикăсемпе заводсенче, колхозсемпе МТС-сенче аслă Çĕнтерӳ ячĕпе социализмлă ăмăрту сарăлса пырать. Çак ăмăртăва торф кăларнă çĕрте тата вутă хатĕрленĕ çĕрте ĕçлекенсен те хутшăнса, топливо хатĕрлемелли задание пĕтĕмпех тултарассишĕн кĕрешмелле.

Н. ДОЛБИЛОВ,
ВКП(б) Обкомĕн вăрманпа топливо промышленность отдел заведующийĕн заместителĕ.

КĂÇАЛХИ УХУТА СРОКĔСЕМ

Чăваш АССР Совнаркомĕ пирĕн республикăра вăрманпа шыв кайăкĕсене çулла тата кĕркунне тытмалли ухута срокĕсене палăртнă. Карăка, ăсана тата пăчăра—кăçалхи августăн 5-мĕшĕнчен пуçласа килес çулхи февралĕн 15-мĕшĕччен; карăкпа ăсан амисене—августăн 5-мĕшĕнчен пуçласа октябрĕн 1-мĕшĕччен; шывра ишекен тата шывшурсенче пурăнакан кайăксемпе шыв чăххине—августăн 5-мĕшĕнчен пуçласа вĕсем вĕçсе каяччен тытма юрать.

Ответлă редактор заместителĕ Н. С. СТЕПАНОВ.

Наркомгражданстройăн Чăвашстрой трестне Шупашкарта ялан ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: каменщиксем, бетонщиксем, платниксем, столярсем, штукатурсем, малярсем, кровельщиксем, мотористсем, шоферсем, слесарь-металлистсем, сантехника слесарĕсем, электромонтерсем, грузчиксем тата тĕрлĕ специальноçсене вĕренме учениксем кирлĕ.

Мĕнпур работниксене чугун çул транспортĕнче тата çыхăну ĕçĕнче ĕçлекенсемпе пĕртан апат-çимĕç карточки параççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Красная площадь, д. № 7.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретариатăн — 4—26, пропаганда пайĕн — 2—89, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленность пайĕн — 3—97, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, рабселькорсен пайĕн — 0—67, издательство конторин — 0—23.

НТ 00183 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2, ф. 6. 59 42 п. п. Тираж 16.000